Сиплевçĕ

● Çамрăк амăшĕн шкулĕ

Пит хĕрелесрен

Статистикăпа килĕшӳллĕн паян пĕчĕк ачасен 40 процентĕн организмĕ апат-çимĕçе тивĕçлипе йышăнаймасть, вĕсене аллерги канăçсăрлантарать. Çапах та çак чир «çулăхасси» апата мĕнле хатĕрленинчен те килет.

● Çĕр улмине тата ытти пахча çимĕçе вĕтĕ турамалла, фильтрланă сивĕ шывра 12 сехете яхăн тытмалла. Шывне темиçе хутчен те улăштармалла. Çапла майпа сиенлĕ нитратсемпе крахмал тухаççĕ.

● Химикатсене /ӳстерне вăхăтра пĕрчĕллĕ культурăсене вĕсемпе им-çамлама пултарнă/ кăлармашкăн пĕçерес умĕн кĕрпене сивĕ шывра 2 сехет шӳтермелле.

● Аша шăнтмалла – кун пек какая çисен аллерги пулас хăрушлăх чакать. Ăна пĕçерне чухне вĕреме кĕрсен шывне тăкмалла, çĕнни ямалла.

● Мĕн пур çимĕçе, çав шутра улма-çырлана та, пăшăхламалла е духовкăра пĕçермелле.

Усăллă кремни

Кремни – минерал, ăна çамрăклăх элеменчĕ теççĕ, мĕншĕн тесен çын организмра шăпах вăл çитменнипе ватăлать. Кремни çителĕклĕ пулсан пирĕн ӳт те яка, шăлсем, чĕрнесем илемлĕ, çӳç кăпăшка, юн тымарĕсем сывă. Менделеев таблицинчи çак элемент çитмесен атеросклероз, остеопороз, диабет, полиартрит, ытти чир аталанаççĕ, арçынсен ар хăвачĕ чакать.

Кремнин тĕп çăл куçĕсем – сельдерей, редис, хĕвел çаврăнăш тĕшши, помидор, хĕрлĕ кăшман, соя, хăмăр рис, вăрман çырли, ешĕл çимĕç, хывăх, шултра авăртнă çăнăх, хура çăкăр, вăлча, çăмарта. Курăксенчен – чăрăш тăрри /полевой хвощ/, сив курăкĕ /цикорий/, шурут курăкĕ /пырей/, вĕлтрен, ама хупаххи /мать-и-мачеха/.

Организма кремни çителĕклĕ пырса тăтăр тесен унăн шывне хатĕрлеме пулать. Çак тĕллевпе кĕленче савăта 10 грамм кремни хумалла, вĕретсе сивĕтнĕ 3 литр шыв ямалла, марльăпа витмелле, çутă вырăнта 3 кун тытмалла, хĕвел лекекен çĕре лартмалла мар. Шыва сăрăхтармалла, унпа апат хатĕрленĕ чухне усă курмалла. Грипп вирусĕ çакнашкал шывран хăрать, шĕвек шăл ыратсан, ангинăран, сунасран сиплет. Кремни шывĕпе çăвăнни, маскăсем туни питех те усăллă. Ӳт кĕçĕтсен, тăртансан, пӳрлешке тухсан та кремни шывĕ витĕмлĕ. Сиплĕ паха енĕсене те чылай вăхăт çухатмасть. Кремни шывне пӳлĕмри температурăра кĕленче савăтра упрамалла.

Пăлханчăк кăмăл-туйăма çĕклер-и?

● Вĕри кофе ĕçмелле, пылак булка çимелле. Çакă хавхалану кӳрет, ӳрĕк-сӳрĕклĕхе сирет.

● Хавaслă кĕвĕ итлемелле, классика музыки пушшех те лайăх.

● Ваннăна çурри ытларах вĕри шыв тултармалла, ырă шăршăллă çусем ямалла, 15 минут нимĕн çинчен те шухăшламасăр выртмалла. Çакă ывăннине иртерет, мышцăсене çăмăллăх кӳрет.

● Тахçантанпах пăхма ĕмĕтленнĕ фильма пăхмалла.

● Юлташсемпе пухăнма май тупмалла, вĕсем сирĕн кăмăл-туйăма мĕнле çĕклемеллине пĕлеççех ĕнтĕ.

Иммунитета çирĕплетме – бальзам

700 грамм инжира, 500 грамм курагăна, 3 лимона /вăррине кăлармалла/, 250-шар грамм хура сливăпа иçĕме аш арманĕпе авăртмалла. 2-шер апат кашăкĕ пахча кĕпçи /петрушка/ тата укроп вăррине, 200 грамм типĕтнĕ вĕлтрене, 1 апат кашăкĕ юман хуппине кофе арманĕпе вĕтетмелле. 2 шăл ыхрана хуппипе пĕрле пăс çинче 5-10 минут пĕçермелле. Сивĕнсен тасатса аш арманĕпе авăртмалла. Мĕн пур çимĕçе пĕрлештермелле. 50 миллилитр катăркас тата эхинацея шĕвекне /настой/, аптекăра сутаççĕ, 50 миллилитр 70 градуслă спирт, 30 грамм чечек тусанĕ /цветочная пыльца/ тата 60 градуса çити вĕрилентернĕ çур килограмм пыл хушмалла. Лайăх пăтратмалла. Сиплĕ бальзам пулчĕ те. Унпа ватти те, вĕтти те усă курма пултарать, уйрăмах çуркуннекĕркунне тата хĕллехи тапхăрта. Çак вăхăтра пирĕн иммунитета хӳтлĕх кирлĕ. 3-5 çулсенчи ачасем – 1 чей кашăкĕ, 5-12 çултисем 1-ер десерт кашăкĕ çиме пултараççĕ. Çитĕннисен виçи – 1 апат кашăкĕ, 3-4 эрне сипленмелле. Сĕткенпе е чейпе сыпса çиме юрать.

Çула тухсан

Кушак курăкĕ /валерьяна/ пулăшать. Хăшĕсем машинăпа /пăрахутпа е тата самолетпа/ кайнă чухне хăйсене япăх туяççĕ: пуç çаврăнать, лĕклентерет, выртас килет. Сире кушак курăкĕ пулăшма пултарать. Унăн чейне çула тухас умĕн – 1 стакан, нумай вăхăт каймалла чухне кунне 2 хут çуршар стакан ĕçмелле. 3-шер пай кушак курăкĕн тымарне, пĕтнĕк /мята/, 4 пай шур чечек /ромашка/ илмелле. Курăксене хутăштармалла. 1 апат кашăкĕ чĕр тавара вĕрекен 1 стакан шыва ямалла. Çур сехетрен сăрăхтармалла.

Симĕс сĕткен. Шпинат сĕткенне е чейне кунне 3 хут апат хыççăн чĕрĕкшер стакан ĕçмелле. Чейне хатĕрлеме 1 апат кашăкĕ шпината вĕтетмелле, 10 минут вĕретмелле. 1 сехетрен сăрăхтармалла.

Импĕр чейĕ те пулăшать.

Антонина ДОЛГОВА хатĕрленĕ.

● Йăла-йĕрке

Раштав уйăхĕ

Раштав уйăхĕ – çулталăк пĕтмĕшĕ. Сĕм-авалхи чăваш календарĕнче «раштав» ятлă уйăх пулман. Вăл чăвашсем Христос тĕнне йышăнсан кăна сарăлма пуçланă. Ку уйăх çĕнĕ календарьти декабрь вĕçĕпе январь чиккине ӳкнĕ. Чиркӳ календарĕ тăрăх – çак вăхăтра Христос çуралнă куна уявланă, вырăсла ăна «Рождество Христово» тенĕ. Христос тĕнне ĕненекенсен аслă çак праçникĕн ячĕ чăваш хушшинче хĕллехи уйăха палăртма тытăннă. «Раштав» уйăх ячĕ вырăс чĕлхинчи «рождество» сăмахăн чăвашланнă сăн-сăпачĕ кăна пулса тăрать.

Пирвайхи хут «раштав» уйăх ячĕ 1737 çулта В.Н.Татищев пухнă анкета хуравĕсенче çырăнса юлнă. Унта ăна вырăсла «генварь» /январь/ тесе куçарнă. И.Г.Георги «Раççей патшалăхĕнче пурăнакан мĕн пур халăха çырса кăтартни» ĕçре *«раштау оих»* тенине *декабрь* тесе куçарать. Пирвайхи хут ку ĕç нимĕçле 1775 çултах пичетленсе тухнă, 1779 çулта ăна вырăсла куçарса кăларнă. Чăваш хушшинче «раштав» уйăх ячĕ XVIII ĕмĕрте сарăлнă.

Анчах та XIX ĕмĕрте пичетленнĕ чылай ĕçре «раштав» тĕл пулмасть. Акă, В.П.Вишневский 1836 çулта кăларнă чăваш чĕлхин грамматикинче *чӳк уйăхĕ /чук оих/* хыççăн тӳрех *мăн кăрлачпа /мун кырлач/, кĕçĕн кăрлач /кизинь кырлыч/* карталанса каяççĕ. А.Фукс 1840 çулта пичетленĕ «Хусан кĕпĕрнинчи чăвашсемпе çармăссем çинчен çырнисем» кĕнекере чăваш уйăхĕсен ячĕсене икĕ çĕрте те çырса кăтартнă, анчах «раштав» нихăшĕнче те тĕл пулмасть. Икĕ çĕрте те чӳк уйăхĕ /декабрь/ хыççăн тӳрех мăн кăрлачпа /январь/ кĕçĕн кăрлач /февраль/ сыпăнса пыраççĕ. В.А.Сбоевăн 1856 çулта çаптарнă «Хусан кĕпĕрнинчи ют халăхсене тĕпчени. Чăваш пурнăçне сăнанисем» кĕнекинче те раштав уйăхĕ çырăнса юлман. Кунта та чӳк уйăхĕ /декабрь/ хыççăн мăн кăрлачпа /январь/ кĕçĕн кăрлач /февраль/ черетленсе пыраççĕ. А.Ф.Риттих «Раççей этнографийĕ валли пухнă япаласем. Хусан кĕпĕрни» кĕнекере те чăвашсем уйăх ячĕсене çак йĕркепех çырса кайнă. Кĕнеки ку 1870 çулта пичетленнĕ. Анчах та Н.И.Золотницкий 1867 çулта Хусанта кăларнă «Çулталăк кĕнеки» ятлă пирвайхи чăваш календарĕнче чӳк уйăхĕ /ноябрь/ хыççăн раштав */раждав оих/* – декабрь тăрать, ун хыççăн тин мăн кăрлачпа /январь/ кĕçĕн кăрлач /февраль/ сыпăнса каяççĕ. Çак йĕркене Н.И.Золотницкий 1874 çул валли пичетлесе кăларнă «Çулталăк кĕнекинче» те сыхласа хăварнă, анчах та кунта декабрь уйăхĕн ятне «раштав оихь» тесе чăвашлатсарах çырнă. «Тымар сăмахсен чăвашла-вырăсла словарĕнче» те раштав уйăхĕ */раштав ойыхь/* чӳк уйăхĕпе аслă кăрлач хушшинче тăрать.

Каярахпа çырса илнĕ уйăх ячĕсен йĕркинче раштав уйăхĕ е декабре тӳр килет, е январь çине ӳкет. Анчах та 70-80 çул кăна каялла çырса илнĕ уйăх ячĕсен хушшинче те раштав уйăхĕн ячĕ сайрара пĕрре кăна тĕл пулать.

* * *

Кĕрешĕн тутарсен авалхи календарĕ чăваш календарьне питĕ çывăх тăрать. Унта чăваш календарĕнчи раштав вырăнĕнче «хĕл уйăхĕ» /тутарла кыш *ае, кăш айă* – «ноябрь»/ тăрать. Вăл чӳк уйăхĕпе /тутарла: *келэу ае, кĕлев айă* – «октябрь» – чăвашла: «кĕлĕ уйăхĕ»/, мăн кăрлач /тутарла: *агам кырлач ае, ахам кăрлач айă* – «декабрь» – чăвашла: пичче кăрлач уйăхĕ/ хушшинче тăрать. Чăваш календарĕнче раштав уйăхĕ те чӳк уйăхĕпе мăн кăрлач хушшине килет. Апла пулсан тахçан авал хĕл пуçламăшне килекен раштав уйăхне чăвашсем те «хĕл уйăхĕ» тенĕ тесе çирĕплетме май пур.

1923 çулта тухнă «Чăваш календарĕнче» çулталăкри вун иккĕмĕш уйăха *сурхури уйăхĕ* тенĕ. Ку уйăхра сурăхсем путек тума пуçлаççĕ, вĕсем çуралнăшăн савăнса, çак уйăхра праçник туса картара сурăх ури тытмалли йăла пулнă тесе ăнлантарнă çав календарьте.

Красноармейски районĕнчи Яманакра И.Патмар çырса илнĕ авалхи календарь шутласа пымалли хĕвел кăралĕ çинче вара *чӳклемӳ уйăхĕ* хыççăн *кану уйăхĕ* – «декабрь» пырать, ун хыççăн вара – *сив уйăхпа* /январь/ *хыт сив уйăхĕ*.

Тĕрлĕ вăхăтра çырса илнĕ чăваш календарĕсенчи уйăх ячĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарса тишкерсен çулталăк пĕтмĕшĕпе пуçламăшĕнчи уйăх ячĕсем питĕ пăтравлă пулни курăнать. Ытахальтен мар çакă. Вăл чăвашсем авал çулталăк пуçламăшне кĕркунне те çуркунне кун таврăннă вăхăтра шутлама пуçланинчен килет. Чăваш хушшинче XVII-XIX ĕмĕрсенче вырăс календарĕ сарăлса вăй илсен кăна Çĕнĕ çул пуçламăшĕ январь уйăхĕн пирвайхи кунĕ çине ӳкнĕ. Çавна пула уйăх шучĕсен авалхи йĕрки арканса кайнă. Çĕнĕ календарь тăрăх – Çĕнĕ çула палăртма чăвашсем вырăс чĕлхинчен «раштав» сăмах илнĕ.

Раштав уйăхĕ – çулталăк вĕçĕ, раштав вĕçĕ – Çĕнĕ çул пуçламăшĕ. Вăл раштав сиввисемпе килсе çитнĕ те тин кăна хутса кăларнă чăваш пӳрчĕсене «шурă сурăх» пулса йăраланса та йăванса пырса кĕнĕ. Раштав уйăхĕ тулса сивĕ тӳпене куçса тухсан вак хĕррисем пăрланма пуçланă. Уй-уй урлă хывнă çулсене раштав тăманĕсем шăла-шăла лартма тытăннă.

Кун хыççăн кун таврăнса, уйăх хыççăн уйăх улшăнса пынă, кивĕ çул çĕнĕ çула çаврăнас вăхăт та çитнĕ... Пурнăç урапи шав малтан мала васканă. Вун икĕ уйăх – вун икĕ пĕр тăван – тахçанах тулса каталнă ĕнтĕ. Раштав уйăхĕн каялла тăхрин катăк çурли те пасарнă йăмрасем айне йăпшăннă яла аран çутатать. Урам урлă кӳршĕ хапхи çине çутă ури ыватнă улах пӳрчĕн чӳречинчен кăрлач хыттăнах шаккать. Ахăртнех, шăллĕ валли нарăс пики шырать...

Николай ЕГОРОВ

Александр Георгиевич ВАСИЛЬЕВ

Чăваш музыка искусстви йывăр çухату тӳсрĕ. 2012 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче йывăр чирленĕ хыççăн 65 çула кайса паллă композитор, Раççей Федерацийĕн Композиторсен союзĕн членĕ Александр Георгиевич Васильев вилнĕ.



А.Г.Васильев 1948 çулхи кăрлачăн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Тăвай районĕнчи Тăрмăш салинче вĕрентекенсен çемйинче çуралнă. Унтах тулли мар вăтам пĕлӳ илнĕ. 1967 çулта Шупашкарта Ф.П. Павлов ячĕллĕ музыка училищин теори уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă. Гнесинăсен ячĕллĕ Патшалăх музыка педагогика институтĕнче никĕс професси пĕлĕвĕ илнĕ хыççăн 1972 çултанпа Шупашкар хулинче ĕçлесе пурăннă. А.Г.Васильев пултарулăхĕ – Чăваш Енпе Раççейĕн ку чухнехи музыка культурин чи витĕмлĕ страницисенчен пĕри. Пысăк талант, пултарулăх ĕçĕнче ырми-канми вăй хуни ăна наци музыкин шедеврĕ пулса тăнă произведенисем çырма май панă, вăл чăваш професси искусствин чи чаплă ĕçченĕсен йышне кĕнĕ. Унăн музыки Тăван çĕр-шывăн ку чухнехи композитор шкулне çĕнĕ сăнарсемпе, стиль элеменчĕсемпе, музыкăри уççăнлăх хатĕрĕсемпе пуянлатнă.

А.Г.Васильев музыка искусствин кăткăс жанрĕсенче ĕçленĕ, кашнинчех ăнăçу тунă. Вăл – «Чакка» тата «Иван Яковлев» наци оперисен авторĕ, вĕсене Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн сцени çинче лартнă. Унăн «Праздничная увертюра», «Токката», «Приношение Федору Павлову», «Бабье лето», «Поклонение Земле и предкам» симфони произведенийĕсем, «Тăри», «Вĕç, вĕç, куккук» тата ытти сюити анлă сарăлнă. Вăл çырнă «Çурхи вăйăсем», «Ухинкел ялĕн юррисемпе ташшисем», «Шапăртăк» Италире, Испанире, Францире, Бельгире, Германире, Чехире, Польшăра, Египетра, Аслă Британире, Нидерландра пĕтĕм тĕнчери 50 ытла фольклор фестивалĕнче Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕн программисене илем кӳнĕ. А.Васильевăн хорпа юрламалли произведенийĕсене профессионал тата художество пултарулăх коллективĕсем шăрантараççĕ, фортепианăпа калама çырнă, камера-инструмент, симфони сочиненийĕсем Чăваш радио тата телекурав фонĕсенче упранаççĕ.

А.Г.Васильев Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче тата И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн искусствăсен кафедринче педагогра ĕçлесе çамрăк музыкантсене вĕрентсе воспитани парас енĕпе нумай тăрăшнă. Общество ĕçне хастар хутшăннă – ăна Чăваш Республикин Композиторсен союзĕн правленийĕн председательне суйланă, вăл Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи Литературăпа искусство енĕпе Чăваш Республикин Патшалăх премине парас енĕпе ĕçлекен комиссин, ЧР Культура министерстви çумĕнчи музыка искусстви енĕпе ĕçлекен илемлĕх /эксперт/ канашĕн членĕ пулнă.

Музыка искусствинчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн ăна «Раççей Федерацийĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсем, Чăваш Республикин Патшалăх премине панă.

Талантлă композиторăн, ырми-канми ĕçченĕн, ырă кăмăллă çыннăн Александр Георгиевич Васильевăн çутă сăнарĕ яланлăхах халăх асĕнче упранĕ.

М.В.Игнатьев, Ю.А.Попов, И.Б.Моторин, А.С.Иванов, А.В.Самойлова, В.П.Ефимов, Л.И.Черкесов, А.Н.Белянкин, Ю.В.Васильев, В.А.Ванерке, О.Г.Денисова, Н.Н.Казаков, М.Г.Кондратьев, В.К.Кузьмина, С.Л.Павлов, М.Н.Яклашкин, В.Н.Яковлев.

● Пулни-иртни

Çемье сĕтсĕр юлман

Шел те, хуласенчи аслă шкулсенче ял хуçалăхĕпе çыхăннă ятарлă аслă е вăтам пĕлӳ илнĕ çамрăксенчен чылайăшĕ тăван ялне пурăнма таврăнмасть. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Караньяльте çуралса ӳснĕ Константин Сергеев вара кăçалхи утă уйăхĕнчен – Урхас Кушкă ветеринари уйрăмĕн заведующийĕ.

Ялта тĕпленме Чăваш ял хуçалăх патшалăх академийĕнче вĕреннĕ çулсенче районта çуллен практикăра пулни те пулăшнă. Пĕрремĕш кунранах çанă тавăрса ĕçе пикеннĕ. Уйрăмах «Звезда» кооперативран, фермер хуçалăхĕсенчен, килти хуçалăхсенчен куллен телефонпа шăнкăравлаççĕ, пулăшу ыйтаççĕ. Костьăн кроссворд шĕкĕлчеме вăхăт çук, çийĕнчех унта-кунта вĕçтермелле. Юратьха, çăмăл автомашина пур. Патшалăхăн мар – хăйĕн. Тепри пулсан: «Халăх ĕçĕшĕн хамăн транспорта хăвaласа пĕтермĕп-ха», – тет.

Сусăр выльăх чирне палăртать те сиплев курсĕ витĕр кăлармашкăн эмел туянма хут çырса парать. Кун каçа темиçе тĕле çитет.

Район ветстанцийĕ çирĕплетнĕ графикпе килĕшӳллĕн Çĕпĕр шыççине, Африка мурне, бруцеллеза, ытти чире çулăхма парас мар тесе профилактика ĕçĕ пурнăçлать. Вăл пăхса тăракан çĕрте – 17 лаша, мăйракаллă шултра выльăх 592 пуç, 400 сысна, 2956 чăх-чĕп, 1565 сурăх, 290 йытă, 350 кушак. Вĕсем чирлеме, амак сарма пултараççĕ. Нумаях пулмасть вăл «Звездара» некробактериоза иртĕхме паман. Унтах утă уйăхĕнче ĕне выльăх ыраш амăшне /спорынья/ çисе наркăмăшланнине тĕпчесе пĕлнĕ. Йăмшакланнисене çийĕнчех сипленĕрен кооператив пĕр пуç та çухатман.

Сергеев Караньяльте пурăнать. Сăмах май, çамрăк специалист пулнă май патшалăхран хăйне пурăнмалли вырăн уйăрма ыйтман. Ялта тĕпленме тесе хыснаран пĕрер миллион тенкĕ илнĕ тухтăрсем пек, вырăнти влаçран укçа илмен. Тĕрĕссипе, ял-йыша этеме сиплекен врач кăна мар, ветврач та сывлăш пек кирлĕ.

...Çур çĕр çитеспе Сергеевсен хапхинчен Роза Апполонова тӳнклеттернĕ. Картишне малтан Костя амăшĕ, унтан ывăлĕ тухнă. «Уçăр! Ĕне вилет! – кăшкăрнă хĕрарăм. – Пăрулаймасть, темиçе сехет асапланать».

Ветврач эмел, ĕç хатĕрĕ тултарнă чăматанне кабинăна хунă та автомашинипе Апполоновсем патне çитнĕ. Ĕнене пăхнă: пăру амалăхра тĕрĕс мар вырнаçнине палăртнă. «Çавăнпа çăмăлланаймасть», – пĕтĕмлетнĕ ветврач. Пăру пуçне амалăх çулĕ еннелле çаврăнă, ăна малти урисенчен туртса кăларнă. Пăру вилес патнех çитнĕ, пуçне те çĕклеймен, йĕркеллĕ сывлайман. Ветврач ӳпки тĕлĕнчен пуса-пуса массаж тунă – лешĕ аванах сывлама пуçланă. Ĕнене сиплĕ укол туса вăй илме пулăшнă. Часах вăл ура çине тăрса пăрăва çуласа типĕтнĕ.

Кĕскен: иккĕшне те вилĕмрен çăлнă. Костя районта ĕçлеме пуçланăранпа çур çул кăна пулин те вăл вун-вун çынна пулăшма ĕлкĕрнĕ. Пĕр вырăнтан тепĕрне хăвăрт çитерекенни – çăмăл автомашина. Çавăнпа ăна ачана пăхнă пек пăхать.

Нумаях пулмасть Урхас Кушкă тăрăхĕнче: «Сергеев ветврача машинăсăр хăварасшăн», – текен сас-хура сарăлнă. Ĕçе судра пăхса тухаççĕ-мĕн. «Пирĕн ветврачăн водитель удостоверенине туртса илсен ял тăрăхĕнче хăйĕн тивĕçне хăвăрт пурнăçласси пулмĕ», – пăшăрханать районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин тĕп ветврачĕ Вера Уланкова.

Юрий МИХАЙЛОВ

Геннадий ЮМАРТ

Александр ВАСИЛЬЕВА

Чăваш юрри йĕрсен те –
Вилмерĕ вăл, пĕтмерĕ.
Сан юррупа халь ĕнтĕ
Çитменнине çитерĕ.

Каçса кайса юрлатпăр
Е тaтăлса йĕретпĕр,
Пĕр тарăхса хурлатпăр
Е паттăррăн çӳретпĕр.

Сан кĕввӳнте пур халĕ
Вут-юрату асапĕ,
Асаттесен халалĕ,
Чăвашăн çулĕ, чапĕ.

Чуна хыпса илейĕ
Сассун хĕрӳ кăварĕ,
Курман телей пиллейĕ,
Вĕри куççуль кăларĕ.

Çӳçентерӳллĕ кĕвĕ
Тĕнче тавра çул уçĕ,
Курнатăн улăп евĕр,
Чăваш юррин Алмушĕ.

Пĕлетĕр-и?

● Этемĕн çăварĕнче 40000 яхăн бактери шутланать.

● Флорида штатĕнче слона автомашина чарăнакан вырăнта хăварнăшăн машинăна лартнă чухлех укçа тӳлеттереççĕ.

● Францире çын мар сăн-питлĕ /тĕслĕхрен, ют планета çыннисен сăн-пичĕпе/ пуканесене сутма саккун йĕркипех чарнă.

● Францире пĕр-пĕринчен 60 метртa вырнаçнă икĕ башня пур. Вĕсен хушшинче тăрса кăшкăрсан çын сасси 12 хут янăраса илтĕнет.

● Чечексем çинчен

Лантăш

Шыв патшин хĕрĕ Волхова çамрăк каччăна, Садко ятлăскере, юратни çинчен çакнашкал халап çӳрет. Садко Любавăна юратнине пĕлсен Волхова савнă çынни юрланине, кĕсле каланине итлеме çыран хĕррине тухнă.

Нумай вăхăт çӳренĕ шыв патшин хĕрĕ улăх-çаран тăрăх, анчах та Садко ниçта та пулман. Кĕтмен çĕртенех ăна вăл яштака хурăнсен хушшинче Любавăпа юнашар курнă. Патша хĕрĕ, мăн кăмăллăскер, хытă кулянннипе макăрса янă, тинĕс евĕр кăнкăвак куçĕнчен тăварлă куççуль тумламĕсем йăрлатса аннă. Ахахăн-мерченĕн йăлтăртатса вĕсем курăк çине тумланă, чечек пулса тăнă. Хурлăхлă Волхова шыв айĕнчи сивĕ патшалăхне яланлăхах кайнă, кĕмĕл тĕслĕ, ырă шăршăллă ачаш чечексем çĕр çинче тасалăх, юратупа хурлăх символĕ пулса юлнă.

Администрация Батыревского района информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения, для сельскохозяйственного производства в аренду:

- с кадастровым номером 21:08:080601:46, площадью 23617 кв. м., местоположением: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Бикшикское, северо-восточная часть кадастрового квартала 21:08:080601, сроком на 49 лет.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, село Батырево, пр. Ленина, д. № 5, кабинет № 7. Справки по телефону 8(83532) 61426.

Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен» Саккунĕн 5 статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Судьясен квалификаци коллегийĕ вакантлă çак должноçсем уçăлни çинчен пĕлтерет:

– Чăваш Республикин Аслă Сучĕн икĕ судйин,

– Шупашкар хулин Ленин район сучĕн председателĕн çумĕн,

– Чăваш Республикин Канаш район сучĕн судйин.

Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен» саккунĕн 5 статйин 6-мĕш пунктĕнче палăртнă документсемпе ыйтса çырнисене 2013 çулхи кăрлачăн 15-мĕшĕнчен ĕç кунĕсенче йышăнаççĕ:

– Чăваш Республикин Аслă сучĕн судйин должноçне йышăнма кăмăл тăвакансенчен – 8-12 тата 13-17 сехетсенче, 2013 çулхи кăрлачăн 15-мĕшĕнче 18 сехетчен. Адресĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12-мĕш çурт, 311-мĕш пӳлĕм;

– председатель çумĕн тата район сучĕн судйин должноçĕсене йышăнма кăмăл тăвакансенчен – 8-12 тата 13-17 сехетсенче, 2013 çулхи кăрлачăн 15-мĕшĕнче 18 сехетчен. Адресĕ: Шупашкар хули, Байдуков урамĕ, 23-мĕш çурт, 432-мĕш пӳлĕм.

Конкурса хутшăнакансен ыйтăвĕсене ăçта тата хăçан пăхса тухассине палăртнă йĕркепе пĕлтереççĕ.

ПРОДАЮ

2.Предлагаем по фабричным ценам в рассрочку: стенки, прихожие, спальни, шкафы, комоды, кровати, матрацы в магазине «Балахнинская мебель». Сборка, доставка. А.: Чеб., Гагарина, 11 /напротив Русского драмтеатра/. **Тел. 56-41-21.** Сертиф-но.

6.ПЕСОК, гравмассу. Услуги КамАЗа. Т.: 8-927-845-26-01, **37-96-10.**

8.Гравмассу, песок, щебень, торф, кирп. бой, **керамблок** от производителя. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Керамблоки /20х20х40, 12х20х40/, **цемент, керамзит.** Т.: 89050284130, 89033462293.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, дымоходы. Доставка. **Т. 44-44-33.**

16.Сетку-рабицу от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 68-30-45, 8-927-668-79-41.

23.Сетку-рабицу от производителя более 80 видов, **сетку** сварную более 30 видов, профнастил, гвозди, столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

25.Гравмассу, керамблок, песок, торф. Доставка. Т. 89023277585.

78.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

797.Кирпич силикатный, **КБ 20, известь.** Скидки. Т. 89278460551.

803.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Доставка от 10 до 15 тонн. Тел. 89053465671.

807.МТЗ-82, отвалы, **погрузочное оборудование,** щетки. **Скидки!** Т.: /8352/ 631863, 89379559802.

812.Кирп. дом /газ, надв. постр. из кирпича/ в 2,5 км от п. Вурнары/. **Рассрочка**. Т. 89613449326.

УСЛУГИ

13.Бурение колодцев, скважин; **колодезные кольца,** бордюры, **керамблоки.** Доставка. Т.: 8-965-685-89-75, 8-927-668-96-96.

54.Лечение алкоголизма с 9 до 17 час., кроме воск. А.: Чебоксары, Энгельса, 2. **Т. 621184.** Лиц. 21-01-000772 МЗ ЧР. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ раштав уйăхĕн 13-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
pop408@rambler.ru
hypar@chtts.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7009. Заказ 4501.